Паян – Культура ĕçченĕн кунĕ

# Ялти культура вучахĕсем ялкăшчăр

Библиотекарь ĕçĕ интереслĕ те нумай енлĕ. Унăн хайĕн ĕçĕнче учитель те, художник та, журналист та, психолог та, алла мăлатук тытма пултаракан ăста та пулма тивет. Апла пулин те Муркаш район библиотекисенче хăй ĕçне чунтан юратакан çынсем çеç ĕçлесçĕ теме пулать, мĕншĕн тесен çул çитнине халалласа Муркашри тĕп библиотека «Моргаушский район: история и современность» библиографи указателĕ хатĕрлерĕ. Кунта юлашки çулсенче Муркаш районĕ çинчен каланă материалсене пухса кĕртнĕ. Краеведени материалĕсене упраса хăварас тĕллевпе Муркашри тĕп библиотека



районта пулса иртекен пĕр мероприяти те библиотекарьсĕр иртмест. Кĕнеке куравĕсем, викторинăсем, литература каçĕсем, тĕл пулусем, презентацисем тата ытти ĕçсене тăтăшах туса ирттереççĕ вĕсем. Буклетсемпе библиографи указателĕсене хатĕрлесси те тивĕçлĕ шайра пулса пырать.

Муркаш районне йĕркеленĕренпе 65 ка ĕçченĕсем «Муркаш районĕн çыравçисемпе тавраплĕҫисем» библиографи указателĕ хатĕрлерĕ. Асăннă указатель презентацийĕсем районти библиотекăсенче пулса иртрĕç. Ăна шкулсенче вĕренекенсем те, вĕрентекенсем те хапăлласах йышăнчĕç. Тивĕçлипех хаклаç ку ĕçе Шупашкарти К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче иртнĕ район куне уявлама пухăннă хăнасем. Уявра Муркашри тĕп библиотека «Муркаш районĕн çыравçисемпе тавраплĕçисем» библиографи указателĕн презентацине туса ирттерчĕ, çĕнĕ кĕнекесен куравне йĕркелесе вĕсен авторĕсемпе тĕл пулу ирттерчĕ. Кунта Раиса Соловьева, Олег Прокопьев сăвăçсемпе Н.Л. Яковлев, И.Д. Вязов, Л.П. Сергеев, Е.Е. Ерагин тавраплĕҫĕсем пулчĕç. Раиса Соловьевапа Олег Прокопьев сăвăçсем шăрантарнă сăвăсене пухăннă хăнасем юратса йышăнчĕç.

Районти тĕп библиотека вулакансен кăмăлне тивĕçтерес тĕллевпе хăйĕн ĕçĕнче тĕрлĕ майсем шырать. Тин çеç районти библиотекăсем хушшинче сайт йĕркелес енĕпе районти II конкурс вĕçленчĕ. Конкурса пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче культура ĕçченĕсен кунне халалласа ирттернĕ форумра пĕтĕмлетрĕç. Малти вырăнсене Сосновка, Турай, Юнкă библиотекисем тивĕçрĕç.

Ĕçне кура хисепĕ, теççĕ халăхра. Манмаççĕ çакна библиотекарьсем. Хăйсен ĕçне тивĕçлĕ шайра туса пыма, вулакансен кăмăлне туллин тивĕçтерме, кирлĕ информацие кĕнеке, хаçат-журнал е Интернет урлă çитерме тăрăшаççĕ.

Районти тĕп библиотека ĕçченĕсем пурне те Культура ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлаççĕ, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем туса пыма, çирĕп сывлăхлă пулма, телейпе ăнăçу сунаççĕ.

**Т. КОРОЛЬКОВА,**
**Муркашри тĕп библиотека директорĕ.**

Следстви комитечĕн материалĕсем тăрăх

# Суд тенкелĕ çине лармах тивет

Ку ĕç иртнĕ çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче каçхине Мăн Сĕнтĕрти кулинари çуртĕнче пулса иртнĕ. Çав каç А.В. Завьялов, В.В. Петров тата О.Ю. Бочкарев кулинарире самаях «хăналаннă». Районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем В.В. Алексеев тата А.Ю. Терентьев вĕсене обществăлла йĕркелĕхе пăсмалла марри пирки асăрхаттарнă, эрехпе ашкăнма чарăнма ыйтнă. Анчах та эрех ĕçсе минренĕ услапсене ку килĕшсех кайман. Кулинари çуртĕнчех вĕсем хăйсене асăрхаттараканСене чышкăпа «хăналама» пикеннĕ. Кайран вара кулинари çуртĕнчен урама тĕксе-чышса кăларнă та кунта каллех милици ĕçченĕсене «ăс пама» пикеннĕ. Чышкăсем кăна мар, урасем те хута кайнă.

Асăннă факт пирки 2008 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнче РФ прокуратури çумĕнчи Чăваш Республикинчи следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕнче В.В. Петров, А.В. Завьялов тата О.Ю. Бочкарев тĕлĕшпе уголовнăй ĕçсем пуçарнă, вĕсене пĕр производствăна пĕрлештернĕ.

Следствин малтанхи тапхăрĕнче 2008 çулхи март уйăхĕнче çакă палăрчĕ: О.Ю. Бочкарев контрактпа Самара облаçĕнчи çар чаçĕнче службăра тăрать. Çавна май О.Ю. Бочкарев тĕлĕшпе уголовнăй ĕç материалĕсене малалла тĕпчев ĕçĕсем туса ирттерме Хусан гарнизонĕн çар следстви пайне ярса патăмăр. Унта уголовнăй тĕрĕслев ĕçĕсене чарса лартнă, икĕ уйăхран следстви те вĕçленнĕ. Хыççăн вара уголовнăй ĕçе каялла Етĕрнене следстви пайне ярса пачĕç.

Уголовнăй ĕç каялла килнĕ май тӳрех йывăрлăхсем тупăнчĕç. Мĕншĕн тесен асăннă уголовнăй ĕç тăрăх пĕр свидетельрен те ыйтса тĕпчемен, преступлени тунăранпа вăхăт чылай иртнĕ, преступление тăваканСенчен пĕри тата инкек тӳсекен тепĕр çын шалти ĕçсен органĕсенче ĕçлеме пăрахнă, çĕршывăн ытти регионĕсене ĕçлеме тухса кайнă. Çак преступление тунине куракансенчен хăшĕсене преступленисем тунăшăн айăпласа ирĕкрен те хăтарнă пулнă. Айăпланакансенчен пĕрине пысăках мар преступленисем тунăшăн унтанпа татах икĕ хутчен айăплама ĕлкĕрнĕ, анчах ĕç ирĕкрен хăтарасси патнех çитмен.

Следстви срокне темиçе хутчен те тăснă хыççăн (асăннă уголовнăй ĕç пирки следстви вара 6 уйăха тăсăлчĕ) А.В. Завьяловпа В.В. Петров ку преступление туни пирки çителĕклĕ таран материалсем пухма май килчĕ. Вĕсен айăпне палăртса уголовнăй ĕçе судра пăхса тухма çирĕплетме прокурора ярса панă. Айăплисен ответ тытма тивет.

**Л. ДАВЛЕТШИН,**
**РФ прокуратури çумĕнчи Чăваш Республикинчи следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн следователĕ, 3-мĕш класлă юрист.**

# Алă усса лармаççĕ

Юлашки çулсенче унта та кунта тĕслĕх клубсемпе Культура çурчĕсем усăлни пирки пĕлетпĕр. Пирĕн вара, Çатракассинче пурăнакансен, çынсемшĕн савăннипех чуна ляплантарма тивет. Хăй вăхăтĕнче ялти кивĕ Культура çуртне пăснăшăн, çĕннине çĕклеме хал çитерейменшĕн ял çыннисем те, яшсемпе хĕрсем те пăшăрханаççĕ. Çулланнă кинемейсемпе асатте-асаннесем, атте-аннесем концертсемпе спектакльсем ялсене тухса çӳрени хатĕрĕ асра кăна.

Çатракассисем çапах алă усса ларма шутламаççĕ. Кирек епле уява та пĕрле пухăнса çавра сĕтел хушшинче чуна усса каласма ялти библиотекăна çул тытаççĕ. Кунта ĕçлекен В.П. Конузина вĕри чейпе, кукăльсемпе хăналаса яни сим пыл пекех пуриншĕн те. Çĕнĕ хаçат-журналпа, кĕнекесемпе паллашни мĕне тăрать тата.

Çурхи пĕрремĕш уяв та – Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ – ялти хĕрарăмсене библиотекăна пухрĕ. Уяв концерчĕ те, парнесем те, ялти çынсемпе тĕл пулни те, тĕнчери экономика кризисĕ кĕсьене тивсен те чуна тивменни тата ытти пирки те пулчĕ сăмах çавра сĕтел хушшинче.

**С. ФЕДОРОВА,**
**хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

# Паянхи пурнăçа сăнланă

Ял çыннин пушă вăхăт нумаях мар. Хĕлле çеç, уй-хирте ĕç шавĕ лăплансан, вăл хăйне канлĕрех туять. Çавăн чухне вара хăшĕ чăлха-нуски çыхать, тепри сенкер экран умнерех ларма тăрăшать.

Ку ĕçсене эпĕ те кăмăллатăп. Унсăр пуçне лайăх кĕнеке тупсан вуласа тухмасăр чăтаймастăп. Ытларах чăваш писателĕсен произведенийĕсене кăмăллатăп. Тивĕçлĕ канура пулсан та, пурнăçран юлас килмест. Кашмаш ялĕнчи библиотекăра вăй хуракан О.А. Семенова пулăшнипе чăвашла тухакан çĕнĕ кĕнекесемпе паллашма тăрăшатăп.

Юлашки вăхăтра интереслĕ произведенисем сахал мар пулчĕç: С. Павловăн «Авăр», Х. Агиверăн «Пăрлак», Ю. Скворцовăн «Пурнăç хумĕ», Г. Красновăн «Хĕрлĕ тюльпан» т. ыт. те. Пуринчен те ытларах Сергей Павлов çырнă «Тан таппи» кĕнеке чуна пырса тиврĕ. Çак сборникри роман та, повесть те, калавсем те пурнăçра пулакан савăнăçпа инкеке сăнласа параççĕ. Урнов, Ахмет пек геройсем таса чунлă Наталие, Маринăна, Маруçе инкек патне илсе çитереççĕ. Автор кашни пулаканăн чунне тивме пултаракан произведенисем çырма пултарать. Пултаруллă çыравçăна ăнăçу сунас килет.

**М. МАКСИМОВА.**

Прокуратура материалĕсем тăрăх

# Административлă майпа правăна пăснăшăн

Иртнĕ çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче район администрацийĕн финанс пайĕ Ярославка ял тăрăхĕнче 2006 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2008 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕччен тапхăрта бюджет хатĕрлесси тата ăна пурнăçласси епле шайра пулнине тĕрĕслерĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче çитменлĕхсем пулни те палăрчĕ. Акă дирижер должноçне кунта квалификаци требованийĕсене тивĕçтермен çынна çирĕплетнĕ. РФ Ĕç министерствин постановленийĕпе килĕшӳллĕн вара кунта ĕçлекенĕн пĕрлехи тариф сеткин чи пĕчĕк разрячĕ çапла кирлĕ: ĕç стажĕ çук пулсан аслă пĕлӳ е ятарлă вăтам пĕлӳ пулсан творчество ĕçĕ-хĕлĕн стажĕ 3 çулран кая мар.

Район прокуратури иртнĕ хушма тĕрĕслев вăхăтĕнче çакна та палăртма май килчĕ: асăннă гражданин дирижер ĕçне пачах пурнăçламан, ĕç вăхăтĕн табельне вара ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хăй çирĕплетнĕ. Çапла вара 2006 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2008 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕччен Ярославка ял тăрăхĕн бюджетĕнчен 52500 тенкĕ те 57 пус сăлтавсăр тӳленĕ, вырăнти бюджета çак суммăлăх тăкак кӳнĕ.

Асăннă факт пирки Ярославка ял тăрăхĕн адресĕпе представлени ярса панă. Район прокурорĕ асăннă гражданинран сăлтавсăр тӳленĕ 52500 тенкĕ те 57 пус укçана бюджета каялла таврасси пирки мировой судья патне иск заявленине тăратрĕ. Прокурорăн иск требованийĕсене пĕтĕмпех тивĕçтернĕ.

Муниципаллă йĕркеленĕвĕн бюджет укçи-тенкине тĕллевсĕр усă курнă май Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тĕлĕшпе административлă майпа правăна пăснă пирки ĕç пуçарнă. Район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕн постановленийĕпе ăна административлă майпа айăпласа штраф тӳлеттерме йышăннă.

**В. ЗАХАРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

Вĕрентӳ

# Пĕр-пĕринпе çыхăну тытса ĕçлемелле

***Кăçал районти вĕрентӳ пайĕ йăлана кĕнĕ январь уйăхĕнчи конференцине пăрахăçларĕ. Ун вырăнне вара районти тăватă вĕрентӳ округĕн центрĕсенче педагогика форумĕсем иртрĕç. Мĕншĕн тума шутланă-ха çак утăма тата пирĕн районта паян вĕрентӳ мĕнле шайра? Çак ыйтусене хуравлама район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçине Зоя Юрьевна ДИПЛОМАТОВАНА ыйтрăмăр:***

– Ăс-тăн паянхи обществăн пуянлăхĕ пулса тăрать. Çын çине патшалăх та тимлĕх ытларах уйăрни тĕрлĕ нацпроектсем урлă палăрать. «Расçей вĕрентĕвĕн 2010 çулччен модернизаци концепцийĕ», «Чăваш Республикин вĕрентĕвне 2006-2010 çулсенче аталантармалли тĕллевлĕ программа», «Чăваш Республикинче 2040 çулччен вĕрентӳ аталанăвĕн стратегийĕ» тата «Муркаш районĕнчи 2007-2010 çулсенчи вĕрентӳ аталанăвĕн тĕллевлĕ программи» – çаксем пурте «Вĕрентӳ» нацпроект пурнăçа кĕрсе пымалли енсем. Шăпах вĕсене тĕпе хурса йĕркеленсе пырать те районти вĕрентӳ политики. Çавăнпа та пирĕн паянхи тĕллев – çӳллĕ шайри вĕрентӳ, ачасен ăс-хакăлне, ăс-тăнне тата ӳт-пĕвĕсене аталантарассине пур енлĕн те пысăк пахалăхпа туса пырасси.

Çак тĕллевпе çыхăннă вĕрентĕвĕн пур шайĕнчи проблемăсене тарăнрах сӳтсе явассипе ĕçе çĕнелĕх кĕртрĕмĕр. Вĕрентӳ процесĕнчи пур субъект та – ачасенчен пуçласа ертӳçĕсем таранах – хăйĕн пĕлтерĕшне тата пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçленин эффективлăхне усăмларах курса ăнланмаллине те шута хутăмăр.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче районта пурĕ 49 вĕрентӳ учрежденийĕ шутланать. Вĕсенчен 15 вăтам, вĕсем хушшинче 1 лицей, 12 тĕп шкул, 4 пуçламăш шкул-ача сачĕ, шкул çулне çитмен ачапăча учрежденийĕсем 15 тата 3 хушма вĕрентӳ учрежденийĕ. Çак вĕренӳ çулĕнче сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 4073 ача шутланнă. «Муркаш районĕнчи 2007-2010 çулсенчи вĕрентӳ аталанăвĕн тĕллевлĕ программийĕ» килĕшӳллĕн вĕрентӳ условийĕсене оптимизацилес тесе тĕрлĕ улшăнусем пулса иртрĕç. Çапла Тивĕшри тĕп шкул пуçламăш шкулача сачĕ статуслă пулса тăчĕ. Муркашри вăтам шкулăн Çурлатринчи филиалĕ шкулпа пĕрлешрĕ. Малаллахи вăхăтра та ачасен хисепĕ чакса пырасси паллă. Районта вара пуçламăш классенче 4-6 ача вĕренекен шкулсем те пур. Кусем Шуркассинчи тата Тивĕшри пуçламăш шкул-ача сачĕсем. Çавăнпа та пирĕн районăн вĕрентӳ системин экономика кăтартăвĕсем республикăра лайăххисен шутĕнче мар. Классенче вăтамран районта 14,6 ача пулсан, республикипе – 19 ача. Кăçалхи бюджета та эффективлăрах усă курма тăрăшмалла пулать.

Ачасем шкула хăвăртрах хăнăхчăр тата тантăшĕсем хушшинче те хăйсене çирĕп тытчăр тесен, вĕсене ача сачĕсене çӳретмелле. Малтанхи вĕренӳ çулĕпе танлаштарсан, садиксенче хушма ушкăнсем йĕркелемелле тата ĕç режимне улăштарнипе паян садике103 ача ытларах çӳрет. Ача сачĕсене черет ан пултăр тесе кăçал «Путенере» чи кĕçĕннисене валли икĕ хушма ушкăн йĕркелеме палăртрăмăр. Ача сачĕсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ тĕрлĕ программăсемпе пулса пырать: «Сообщество», «Шкул-2100» тата ытти лайăх пахалăхлă программăсемпе. Вĕсене тĕпе хурса ĕçленипех ĕнтĕ «Путене», «Солнышко» тата «Малыш» ача сачĕсен воспитанникĕсем республикăри конкурссенче те çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç. Воспитательсем те хăйсен пĕлĕвне тăтăшах ӳстереççĕ, Грантсем çĕнсе илеççĕ.

Анчах та садиксенче татса паман ыйтусем çук мар. Малтанах вăл Муркашра тата Мăн Сĕнтĕрте «ачасен черечĕ» пулни. Çав хушăрах ытти садиксенче туллин ĕçлесе пыма демографи лару-тăрăвĕ ура хурать. Садиксене пурлăх енĕпе пуянлатас ыйту та паян çивĕччисенчен пĕри. Ачасен вĕрентӳ тата воспитани пахалăхĕ унтан нумай килет.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).

Вулакан пултарулăхĕ

# Этем чĕлхи

Мĕскер кăна этем чĕлхи тумасть,
Чăнах та тĕрĕс шăмăсăр тени.
Анчах элекçĕ ыррине курмасть,
Ахаль иртмест çынна варалани.

Самантлăха, паллах, вăл савăнать
Тӳрĕ çынна хурлантарса хăртсан.
Вăхăт çитсен Турри ăна чарать,
Ырри пулмасть çылăх мĕнне мансан.

**П. ВОРОБЬЕВ.**